25-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 июнь 7 вырсарникун 131 (6066) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ПУРТЕ КРОСА ХУТШӐНАР

Паян профсоюз членӗсемпе комсомолецсен çуллахи кросӗ пуçланать.

Вӑрмансем уçланкисем, çеçен хирсем, физкультура площадкисем паян совет çамрӑкӗсен хаваслӑ сассисемпе тулаççӗ. Вуншар пин çамрӑксемпе хӗрсем старт патне пыраççӗ.

Çакӑн пек ӑмӑртусем пирӗн çӗршывра пӗрремӗш хут мар пулса иртеççӗ. Кросс (ӑмӑрту) çамрӑксен традициллӗ праздникӗ пулса тӑчӗ.

Кашни совет çамрӑкӗ мухтавлӑ Хӗрлӗ Çар ретне тӑма хатӗрленет. Кроссене хатӗрленнӗ май, совет халӑхӗн ывӑлӗсемпе хӗрӗсем боеца кирлӗ паха енсене хӑнӑхаççӗ, тӗл пулакан чӑрмавсемпе кӗрешме, вӗсене çӗнтерме пултарнине кӑтартса параççӗ.

ВЦСПС Президиумӗпе ЦК ВЛКСМ çирӗплетнӗ положенире паян пуçланакан кросӑн тӗллевне кӑтартса панӑ. Çав положени тӑрӑх, ӗçхалӑх массине ытларах физкультура занятийӗсене хутшӑнтармалла, вӗсене чупма, гранатӑна тӗл тата инçе ывӑтма, хырӑмпа пластунла шума вӗрентмелле. Паллах, ку задачӑна пурнӑçлама çӑмӑл мар, анчах вӑл хисеплӗ ӗç пулса тӑрать. Кросс тӑван çӗршывӑн оборонине тӗреклетес задачӑпа çыхӑнмалла. Çавӑнпа кроса нихӑçанхинчен лайӑх ирттермелле, çамрӑксене ытларах хутшӑнтармалла. Ку тӗлӗшпе комсомол тата профсоюз организацийӗсен хӑйсен яваплӑхне кӑтартмалла.

Республикӑри чылай организацисем кроса тивӗçлипе хатӗрленсе кӗтсе илчӗç. Сӑмахран, Сӗнтӗр районӗнче кроса хатӗрленес тӗлӗшпе нумайранпа тренировка пулса пычӗ. Дистанцисене малтанах хатӗрлесе хунӑ, судьясен коллегине уйӑрса çирӗплетнӗ. Кроса хатӗрленнӗ май районри 800 çамрӑк чупас тата граната ывӑтас тӗлӗшпе нормӑсем панӑ. Паян 1.500 çамрӑк старта тухать.

Шупашкар хулинчи çамрӑксем те кроса начар мар хатӗрленчӗç. 10 километра кайса поход туса ирттерчӗç. Унта пурӗ 347 çамрӑк хутшӑннӑ. Паян хулари пин ытла çамрӑк старт патне пырать. Чӑвашсоюз, столовӑйсен трестӗ çумӗнчи комсомол организацисем, «Буревестник», «Динамо», «Медик» спорт организацисенчи çамрӑксем чупас, граната ывӑтас тата хырӑмпа пластунла шӑвас тӗлӗшпе хӑйсен мастерлӑхне кӑтартаççӗ.

Тренировкӑллӑ занятисенче уйрӑм комсомолецсем паха тӗслӗхсем кӑтартрӗç. 4-мӗш номерлӗ шкулти З. Юдина комсомолка 500 метра 1 минута та 38 секундӑра чупса тухать, гранатӑна 29 метр ывӑтать, хырӑмпа пластунла лайӑх шӑвать. Столовӑйсен трестӗ çумӗнчи организацинчи комсомолкӑсем Марковӑпа Лисенкова юлташсем те 1 минута та 35—40 секундӑсенче чупса тухаççӗ, гранатӑна 26—28 метра ывӑтаççӗ. Тренировкӑсене Совет Союзӗн спорт мастерӗ Гущина юлташ та хутшӑннӑ. Вӑл 500 метра 1 минута та 26 секундӑра чупса тухать, гранатӑна 38 метр ывӑтать. Гущина юлташ хулари çамрӑксене кроса хатӗрленме пулӑшать.

Çак фактсем комсомолӑн чылай активисчӗсем кросӑн задачисене тӗрӗс ӑнланни çинчен калаççӗ. Вӗсем ӗçӗн ӑнăçлӑхӗ ӑна мӗнле хатӗрленсе кӗтсе илнинчен килнине ӑнланнӑ. Çавӑнпа Сӗнтӗр, Хӗрлӗ Чутай, Сӗнтӗрвӑрри районӗсем хатӗрленӳ ӗçне аван йӗркеленӗ.

Анчах хӑш-пӗр организацисем кроса хатӗрленес тӗлӗшпе япӑх ӗçлерӗç. Етӗрне районӗнче кроса хутшӑнма заявка панисен йышӗ питех те сахал. Тренировкӑллӑ занятисем те йӗркеллӗ пулман. Шупашкарти чылай пысӑк предприятисенчи комсомол организацийӗсем те кроса тивӗçлипе хатӗрленмерӗç.

Табак фабрикинче тата чӑлха çыхакан фабрикӑра (ВЛКСМ организацин секретарӗсем Семеновӑпа Лукояненко юлташсем), Çӗрӗç халӑх комиссариатӗнче комсомол организацийӗсем кроса хутшӑнмалли çынсене медицина енӗпе тӗрӗслентерсех лӑпланса ларнӑ. Тренировкӑсем тӑвассине организацилемен.

Кроса хатӗрленесси Кувакино (ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ Ушкова юлташ), Первомайски (секретарӗ Фомин юлташ) районсенче начар пулса пычӗ. Кунта спорт площадкисем туман, тренировкӑллӑ занятисем те пулса иртмерӗç. Кроса хутшӑнмалли юлташсене ку таранччен те медицина енӗпе тӗрӗслесе пӗтермен.

Кросс июнӗн 7-мӗшӗнче пуçланса июнӗн 21-мӗшчен пырать. Çителӗксӗр хатӗрленнӗ организацисен хатӗрленӳ ӗçӗсене хӑвӑртрах туса çитерсе, кашни çамрӑка, профсоюзӑн кашни членне тата кашни комсомолеца кроса хутшӑнтарма тӑрӑшас пулать.

Профсоюз членӗсемпе комсомолецсен кросӗн тӗллевӗ — çамрӑксене чупма, гранатӑна инçене тата тӗл ывӑтма, хырӑмпа пластунла шума вӗрентесси, çамрӑк ӑрӑва яланах физкультурӑна юратма хӑнӑхтарса хӑварасси пулса тӑрать. Паян ӗнтӗ кросс пуçланать. Ӑмӑртӑва лайӑх йӗркелени кирлӗ. Кам мӗнле дистанцие кайса килнине е ывӑтнине тӗплӗн шута илмелле. Старт патӗнче йӗркесӗрлӗх ан пултӑр, çавна асӑрхамалла. Ӑмӑртӑва тӗрӗс йӗркелесен, кросӑн çитӗнӳвӗсем аванрах пулӗç.

Профсоюз членӗсемпе комсомолецсем! Пурте çуллахи иккӗмӗш ӑмӑртӑва хутшӑнар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 5-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Июнӗн 5-мӗшӗнче фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче, вырӑнти çапӑçусем тата разведчиксен активлӑ ӗçӗсем пулса пынӑ.

* * *

Июнӗн 4-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗçсен 20 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 75 автомашинине, горючи тултарнӑ 3 автоцистернине, боеприпассем тиенӗ 60 лавне, 18 полевой тата зенитнӑй орудине, 5 минометне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, ангара аркатнӑ, чугунçул çинчи 40 вагона çӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине 5 ротӑна çити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Çурçӗр-Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть пӗр кун хушшинче нимӗçсен пехотин танксем пулӑшса пынипе тунӑ темиçе атакине сирсе пӑрахнӑ. Противник пысӑк çухатусем тӳснӗ. Нимӗçсен 11 танкне персе çӗмӗрнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче пирӗн боецсем, оборонӑллӑ çапӑçусем туса пырса, нимӗçсен 5 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Гусаров юлташ командир пулса ертсе пыракан часть (Калинин фрончӗ) халӑх пурӑнакан çирӗплетнӗ пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗçсен 100 салтакпа офицер ытла вилнӗ. Каярахпа гитлеровецсем подкреплени илсе пынӑ та темиçе хутчен контратака туса пӑхнӑ. Нимӗçсен контратакисене пурне те сирсе пӑрахнӑ. Çапӑçу хирӗнче 250 виле хӑварса, противник каялла чакнӑ. Пирӗннисем трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн танкистсем противник вырнаçса тӑнӑ вырӑна сасартӑк çӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ. Пулса иртнӗ çапӑçура нимӗçсен 2 танкне тата темиçе орудийӗпе пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Халӑх пурӑнакан пӗр пункт районӗнче нимӗçсен 400 салтакӗпе офицерне çити вӗлернӗ.

* * *

Пирӗн самолетсен темиçе ушкӑнӗ тӑшманӑн аэродромӗ çине (Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç фрончӗ) ӑнăçлӑн вӗçсе пырса тапаннӑ. Противникӑн зениткисем пирӗн летчиксем нимӗçсен çӗр çинчи 60 самолетне штурмлама тытӑнсан тин пеме пуçланӑ. Çак операци вӗçленсе пынӑ чухне сывлӑшра тӑшманӑн истребителӗсем курӑнса кайнӑ. Сывлӑшри çапӑçу пуçланса кайнӑ, çапӑçура «Мессершмитт» йышши 3 самолета персе ӳкернӗ. Пирӗн истребительсем çав аэродром çине тапӑнса нимӗçсен 40 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 2 самолет пӗтнӗ.

* * *

Старши лейтенант Филимоненков командир пулса ертсе пыракан боецсен ушкӑнӗ, противникӑн тылне кӗрсе кайса, унта нимӗçсен 30 автоматчикне тӗл пулнӑ. Сасартӑк пырса çапса, пирӗн боецсем гитлеровецсен çав ушкӑнне пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Партизансен «Дед Фома» ятлӑ отрячӗ, Калинин облаçӗн нимӗçсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, кӑнтӑрла халӑх пурӑнакан Г. пункта кӗрсе кайнӑ. Партизансем 30 гитлеровец апат çисе ларнӑ столовӑя гранатӑсем ывӑтнӑ. Нимӗçсен фашистла оккупанчӗсем хушшинче паника пуçланса кайнипе усӑ курса, партизансем япала складне аркатса тӑкнӑ та тумтирсемпе атӑ-пушмаксене нимӗçсен лавӗсем çине тиесе илсе тухса кайнӑ.

* * *

Нимӗçсен 55-мӗш эскадринчен тыткӑна лекнӗ летчик обер-фельдфебель Альфред Гоберг çапла каласа панӑ: «Темиçе кун каялла 55-мӗш эскадрӑри 3 бомбардировщика вырӑссен пехотин колоннисем ӑçталла куçса пынине пӗлме задани панӑ. Разведка тунӑ вӑхӑтра пире зениткӑсенчен пере пуçларӗç. Батарейӑсем пӗрремӗш хут харӑс персе ярса манӑн самолета тивертрӗç, иккӗмӗш самолет сывлӑшрах çунса кайрӗ, виççӗмӗш самолет каялла кайрӗ. Совет летчикӗсене эпир чи хӑюллӑ та чи хӑрушӑ противник тесе шутлатпӑр. Нумай пулмасть эпӗ сывлӑшри пӗр çапӑçура пултӑм. Нимӗçсен 10 самолет, вырӑссен 3 кӑна. Пирӗн вӑй ытларах пулнине пӑхмасӑрах вырӑссем çапӑçӑва кӗрсе кайрӗç. Вӗсене пирӗн пӗр самолета персе ӳкерме май килчӗ, вара пирӗн ытти самолетсем задание пурнӑçлаймасӑрах каялла кайрӗç».

* * *

Юлашки вӑхӑтра Çурçӗр Норвегире нимӗçсен укреплениисем тӑвакан отрячӗсене пырса тапӑннисем час-часах пула пуçларӗç. Нумаях пулмасть Нарвик патӗнче Норвеги патриочӗсем нимӗçсен хуралне вӗлерсе пӗтернӗ те çав строительствӑра ӗçленӗ 60 çынна, тыткӑнра пурӑнаканскерсене, ирӗке кӑларнӑ.

Июнӗн 6-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 6-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле фронтра паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сывлӑшран тапӑннинчен хӳтӗлекен летчик-истребительсем нимӗçсен разведчикӗсемпе бомбардировщикӗсене хирӗç активлӑн кӗрешеççӗ. Юлашки икӗ кун хушшинче ПВО-н истребительнӑй авиацийӗ противникӑн 15 самолетне персе ӳкернӗ. Проскурин лейтенант нимӗçсен «Хейнкель—111» йышши самолетне таран туса çӗмӗрнӗ. Кӗçӗн лейтенант Родионов «Ю—88» йышши разведчика таран туса çӗмӗрнӗ. Кайран палӑртнӑ тӑрӑх, çак самолетӑн пӗтӗм экипажӗ нимӗç офицерӗсенчен тӑнӑ. Пирӗн летчиксем паха документсем тытса илнӗ.

* * *

Противникӑн тылӗнче кӗрешекен пирӗн часть (Хӗвеланӑç фрончӗ) нимӗçсен пехотин танксем пулӑшнипе туса пынӑ хаяр атакисене сире-сире пӑрахнӑ. Противникӑн темиçе çӗр салтакӗпе офицерӗ вилнӗ е аманнӑ. Нимӗçсен 8 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн разведчиксем халӑх пурӑнакан К. пункта атакӑланӑ та нимӗçсен 100 çынтан тӑракан гарнизонне пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн 5 истребитель, Орешин лейтенант ертсе пынипе, противникӑн пехотине турттарса пыракан автомашинӑсен колоннине штурмланӑ. Çав вӑхӑтрах сывлӑшра нимӗçсен «Мессершмитт» йышши 30 самолечӗ курӑнса кайнӑ. Пирӗн летчиксем, пуçарулӑха хӑйсен аллинчен пӗр минутлӑха та вӗçертсе ямасӑр, çапӑçма тытӑннӑ та 3 «Мессершмитта» персе ӳкернӗ. Пирӗн пӗр самолет пӗтнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн разведка тӑвакан отряд Плужников юлташ ертсе пынипе, противникӑн окопӗсене çӗмӗрсе кӗнӗ те 16 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Темиçе салтака тыткӑна илнӗ. Нимӗçсен 15 самолечӗ пирӗн утлӑ пӗр часть çине бомбӑсем пӑрахма хӑтланнӑ. Старши лейтенант Ганжа тата сержант Иванников зенитнӑй орудисенчен пеме тытӑннӑ та нимӗçсен «Юнкерс—88» йышши 4 самолетне персе ӳкернӗ. Противникӑн ытти самолечӗсем вара часах тарса кусран çухалнӑ.

* * *

Смоленск облаçӗнчи партизансен Г. юлташ ертсе пыракан отрячӗ нимӗçсен çар эшелонне крушени туса çӗмӗрнӗ. Крушени пирки 10 вагон çӗмӗрӗлнӗ, 15 вагон сиенленнӗ. 8 автомашина, 4 танк тата горючи тултарнӑ цистерна ванса пӗтнӗ. Вагонсен ванчӑкӗсем айӗнче нимӗçсен фашистла оккупанчӗсем 250 çын вилсе выртнӑ. Тепӗр кунне çак отряд чугунçул çинчи пысӑк станци çине ӑнăçлӑн пырса тапӑннӑ. Станци хуралне вӗлерсе пӗтерсе, партизансем боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ тата чугунçула 1.200 метр тӑршшӗнче пӑсса хунӑ.

* * *

Нимӗçсен 113-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 260-мӗш полкри 3-мӗш ротӑн тыткӑна лекнӗ командирӗ лейтенант Оскар Рехенбах çапла каласа панӑ: «Вырӑссен танкӗсем пирӗн оборонӑна татрӗç те пирӗн ротӑна каялла кайма çул пӳлсе хучӗç. Эпӗ хамӑра çавӑрса илнине куртӑм та салтаксене пӑшалсене хурса пӑрӑнма хушрӑм. Ку вӑрçӑ салтаксене çеç мар, офицерсене те ывӑнтарнӑ ӗнтӗ. Пурин те киле каяс килет. «Çисӗм пек хӑвӑрт туса ирттермелли вӑрçӑ питӗ вӑраха кайни паллӑ пулса тӑрсан, офицерсен те шухӑш-кӑмӑлӗсем палӑрмаллах япӑхланчӗç. Пурте çакӑн пек шухӑшлаççӗ: эпир Хӗрлӗ Çарӑн вӑйне çителӗклӗ таран хак памарӑмӑр, теççӗ. Вӑрçа пӗтерсе лартас пулать, мӗншӗн тесен нимӗçсен çарӗ вырӑссен иккӗмӗш хӗлне чӑтса ирттерес çук». Юлашкинчен Рехенбах çапла каланӑ: «Манӑн çакна йышӑнма тивет: Киевӑн урамӗсенче эсэсовецсем пӗр айӑпсӑр çынсене пере-пере вӗлернине эпӗ хам куçпа хам куртӑм».

* * *

Бреслав хулинче (Германия) хӗрарӑмсем никам йӗркелемесӗрех демонстраци туса ирттернӗ. Демонстрантсем упӑшкисене фронтран киле яма тата вӑрçа пӗтерсе лартма ыйтнӑ. Полицейскисем çав ушкӑна чукмарсемпе хӑваласа салатнӑ, темиçе вуншар хӗрарӑма арестлесе тӗрмене хупса лартнӑ.

* * *

Брага хулинчен инçех мар вырӑнта чех патриочӗсем нимӗç оккупанчӗсен бензин тултарнӑ поездне çунтарса янӑ. Вутра 18 цистерна çунса кайнӑ.

Профсоюз членӗсемпе комсомолецсен çуллахи кросӗ

Паян профсоюз членӗсемпе комсомолецсен çуллахи иккӗмӗш кросӗ пуçланать. Ку кросс çуллахи спорт сезонӗнчи чи паллӑ мероприяти пулса тӑрать. Унӑн тӗп задачи—ӗçхалӑх массисене çар ӗçне вӗрентесси, вӗсене физкультура ӗçне ытларах хутшӑнтарасси пулса тӑрать. Кросс июнӗн 21-мӗшчен пырать. Йӗлтӗрçӗсен кросӗ чухнехи пекех, ку кроса вуншар пин çамрӑк хутшӑнмалла.

Çуллахи кроса хатӗрленес енӗпе ВЛКСМ райкомӗсем, профсоюз, комсомол тата физкультура организацийӗсем чылай лайӑх ӗçлерӗç. Елчӗк районӗнче кроса хутшӑнас текенсенчен 2 пин те 500 çын тренировкӑна çӳренӗ. Сывлӑх тӗлӗшпе те участниксене вӑхӑтра тӗрӗслесе тухнӑ. Нумаях пулмасть-ха, всевобуч боецӗсемпе комсомолец-çамрӑксен подразделенийӗ 12 километра похода кайса килнӗ. Походра пурӗ 312 çын пулнӑ.

Куславкка районӗнче те кроса тимлӗн хатӗрленчӗç; вӑхӑтра подразделенисем уйӑрса хунӑ. Комсомолецсемпе ытти çамрӑксем кирлӗ таран гранатӑсем туса хатӗрленӗ. Район центрӗнчи стадиона, 3 вӑтам шкул тата 2 туллимар вӑтам шкул çумӗнчи спортплощадкӑсене туса йӗркелесе çитернӗ.

Чкалов районӗнче граната пемелли, хырӑмпа шуса иртмелли вырӑнсене вӑхӑтра палӑртса хунӑ. Патӑръелӗнчи педучилищӗри тата вӑтам шкулти вӗренекенсем тактика ыйтӑвӗсемпе çыхӑнтарса военизированнӑй поход туса ирттернӗ. Комсомольски районра кроса хатӗрленнӗ май 6 шкул çумӗнче тата 3 колхозра спортплощадка тунӑ. Çавнашкалах кроса Сӗнтӗрвӑрри, Шупашкар тата ытти районсем те тимлӗн хатӗрленчӗç. Паян ӗнтӗ комсомолецсем, профсоюз членӗсем, физкультурниксем, пинӗ-пинӗпе кроса хутшӑнса, хӑйсем социализмла тӑван çӗршыва хӳтӗлеме хатӗррине, хӑйсен вӑйне, патварлӑхне, сывлӑх тӗреклине, чӑтӑмлине кӑтартса памалла.

Йӗлтӗрçӗсен кросне лайӑх хатӗрленсе ирттернӗ организацисем ку кроса та лайӑх ирттерме тивӗç. Пирӗн республика Мари республикине социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗнчӗ. Çакна кашни комсомолецӑн асра тытса тимлӗн ӗçлемелле. Унӑн хӑйӗн кӑна мар, союзра тӑман çамрӑксене те кроса хутшӑнтармалла.

Кроса ирттернӗ чухне спорт организацисен учет ӗçне те йӗркеллӗ туса пымалла, ӑмӑрту участникӗсене шута илесси, ӑмӑрту программинче палӑртса хунӑ нормативсене тӗрӗс асӑрхаса туса пырасси çӳллӗ вырӑнта пулмалла.

Иккӗмӗш кросс кӑтартуллӑ, лайӑх пулса иртӗр. Кросӑн кашни участникӗ чӑрмавлӑ вырӑнта чупассин техникине лайӑх вӗренсе çиттӗр, гранатӑна тӗрӗс пеме пултартӑр, пластунла лайӑх шума пӗлтӗр. Çак кросс Хӗрлӗ Çарӑн хӑватлӑ резервӗсен, оккупантсене хирӗç çапӑçма хатӗр тӑракан вӑйсен смотрӗ пулса тӑмалла.

Колхоз çамрӑкӗсен пуçарулӑх ытларах пулма кирлӗ. Республикӑри малта пыракан физкультура коллективӗсен опычӗсене шута илсе ӗçлемелле. Комсомолецсен тата комсомолра тӑман çамрӑксен гимнастика хатӗрӗсем тума тӑрӑшмалла, кашни колхозрах спорт площадкисем организацилемелле.

Кӑçалхи спорт сезонӗ вӑйлӑ сезон пулса тӑрассине шанма тивӗçлӗ. Комсомолецсемпе профсоюз организацийӗсен çуллахи кросӗ хыççӑн ытти ӑмӑртусем те пулса иртмелле. Физкультура движенине массӑна ытларах хутшӑнтарас ӗçе хамӑр тӑван çӗршыва хӳтӗлекенсене тивӗçлипе вӗрентсе хатӗрлессипе таччӑн çыхӑнтарса туса пымалла.

Р. ХАСЬЯНОВ,
ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн секретарӗ.

ПИНШЕР ÇАМРӐК КРОСА ТУХАТЬ

КУСЛАВККА. Районри колхозсенче, учрежденисемпе предприятисенче пуринче те кроса хатӗрленес ӗç пырать. 2242 çын медицина енӗпе тӗрӗслӳре пулнӑ. 1281 çын тренировкӑллӑ занятисене çӳреççӗ. Кроса хатӗрленнӗ май шкулсенчи 6 спортплощадкӑна юсанӑ. Куснар, Тӗрлеме, Карач ялӗсенчи пуçламӑш организацисенче тренировкӑллӑ занятисем организованно пулса пычӗç. Вӑл организацисенчен паян çӗршер комсомолецсемпе профсоюз членӗсем ӑмӑртӑва тухаççӗ. Кросс пурӗ 11 кустра пулать.

ЛОГУНОВ,
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

Çуракинче пысӑк ӗç тухӑçлӑхӗпе тата лайӑх пахалӑхпа ӗçленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗççынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми çине кӗртнӗ:

74. Ишлей МТС-ӗнчи **тракторсен бригади** (бригадирӗ **А. А. Липов** юлташ). Бригада трактор ӗçӗсен планне 107,5 процент тултарнӑ, 1.000 килограма яхӑн горючи перекетленӗ. Çак трактористсем лайӑх ӗçленӗ: **Степан Камерилов, Прокопий Тегерлеев** тата **Анисия Иванова** юлташсем, вӗсем сменӑри нормӑна 4,6 гектартан пуçласа 6 гектара çитиччен тултарса пынӑ, план тӑрӑх кӑтартса панӑ норма — 4 гектар.

75. Ишлей МТС-ӗнчи **тракторсен бригади** (бригадирӗ **Т. Е. Ефимов** юлташ). **Ефимов** юлташӑн бригади çуракинче трактор ӗçӗсен планне 104 процент тултарнӑ, 397 килограмм горючи перекетленӗ. Бригадӑра партиллӗ-массӑллӑ ӗçсене тата техникӑна вӗренессине лайӑх организациленӗ. Трактористсем **М. Родионов, К. Ефимова** юлташсем фронтри пек ӗçленӗ, вӗсем сменӑри нормӑна 4 гектар вырӑнне 5—6 гектар тултарса пынӑ.

76. **Кирилл Иванович Иванов**—Ишлей МТС-ӗнчи тракторист. У—2 маркӑллӑ тракторпа ӗçлесе, вӑл çуркуннехи ӗçсен планне майӑн 20-мӗш тӗлне 155 процент тултарнӑ, 87 килограмм горючи перекетленӗ.

77. **Макар Ефремович Родионов** — Ишлей МТС-ӗнчи тракторист. СХТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗçлесе, вӑл çуркуннехи ӗçсен планне майӑн 20-мӗш тӗлне 178,4 процент тултарнӑ, 209 килограмм горючи перекетленӗ.

78. **Петр Егорович Орлов** — Ишлей МТС-ӗнчи тракторист. СХТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗçлесе, вӑл çуркуннехи ӗçсен планне майӑн 20-мӗш тӗлне 170 процент тултарнӑ, 169 килограмм горючи перекетленӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Старши политрука И. В. Щипуна тата красноармееца И. Н. Фролова Совет Союз Геройӗн званине парасси çинчен

Нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн тата çак ӗçре хӑюллӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн, **Ленин орденӗпе «Золотая Звезда»** медалӗ парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас:

1. Старши политрука Иван Валентинович **Щипуна**
2. Красноармееца Иван Николаевич **Фролова.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнӗн 4-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Танк промышленность Наркомачӗн Уралмашзаводне Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ парса наградӑласси çинчен

Танксем валли броня кӳлеписем туса кӑларас тӗлӗшпе Правительство панӑ заданисене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн Танк промышленность Халӑх Комиссариачӗн Ленин орденлӗ Уралмашзаводне **Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав** орденӗ парса наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнӗн 5-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Танк промышленность Наркомачӗн 38-мӗш номерлӗ заводне Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ парса наградӑласси çинчен

Танксем туса кӑларас тӗлӗшпе Правительство панӑ заданисене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн Танк промышленность Халӑх Комиссариачӗн Ленин орденлӗ 38-мӗш номерлӗ заводне **Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав** орденӗ парса наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнӗн 5-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Танк промышленность Наркомачӗн 183-мӗш номерлӗ заводне Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ парса наградӑласси çинчен

Танксем туса кӑларас тӗлӗшпе Правительство панӑ заданисене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн Танк Промышленность Халӑх Комиссариачӗн Ленин орденлӗ 183-мӗш номерлӗ заводне **Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав** орденӗ парса наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнӗн 5-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Танк промышленность Наркомачӗн 76-мӗш номерлӗ заводне Ленин орденӗ парса наградӑласси çинчен

Танк дизелӗсем туса кӑларас тӗлӗшпе Правительство панӑ заданисене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн Танк промышленность Халӑх Комиссариачӗн 76-мӗш номерлӗ заводне **Ленин орденӗ** парса наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнӗн 5-мӗш.

Иранӑн СССР Союзӗнчи чрезвычайнӑй тата полномочнӑй посолӗ Г. М. Саед Ирана тухса кайнӑ

Кӑçалхи июнӗн 4-мӗшӗнче Иранӑн СССР Союзӗнчи чрезвычайнӑй тата полномочнӑй посолӗ Г. М. Саед Куйбышев хулинчен Ирана тухса кайнӑ.

Пристаньре М. Саед господина Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссариачӗн Протокольнӑй отделӗн заведующийӗ Ф. Ф. Молочков юлташ, Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссариачӗн Вӑтамхӗвелтухӑç отделӗн заведующийӗ С. И. Кавтарадзе юлташ, Иран ӗçӗсен повереннӑйӗ А. Г. Этесами ертсе пынипе Иран посольствин составӗ, çавӑн пекех тата Афганистан посолӗ г. Султан Ахмед Хан, Китай посолӗ г. Шао Ли-цзы, Польша посолӗ г. С. Кот, Англи посолӗ г. А. Керр, Швеци посланникӗ г. В. Ассарссон, Чехословаки посланникӗ г. З. Фирлингер, Югослави посланникӗ г. С. Симич, Турци ӗçӗсен повереннӑйӗ г. М. Дамбел, Греци ӗçӗсен повереннӑйӗ г. И. Джирас, Норвеги ӗçӗсен повереннӑйӗ г. И. Люнде ӑсатнӑ. (ТАСС).

МТС-семпе колхозсенчи социализмлă ăмăрту

Комбайнерсем ĕçе тытăнчĕç

ЕЛЧĔК, июнĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Машинно-тракторнăй станцин коллективĕ Куйбышев облаçĕнчи Больше-Раковски МТС чĕнсе каланине пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яврĕ. Кăçал пирĕн ялхуçалăхĕн çĕршывпа фронт валли вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ, пысăк тухăçлă тырпул туса илмелле. МТС çак ответлă задачăна кăтартуллăн пурнăçлама колхозсене вăйлăн пулăшма хатĕрленет. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, трактористсем тракторпа тумалли ĕçсен планне ирттерсе тултарма йышăнчĕç, сезонра тумалли плана урапаллă СХТЗ тракторпа 22 процент, СТЗ—НАТИ тракторпа 20 процент, «Универсал» тракторпа 20 процент ирттерсе тултарма тата пур ĕçсене те пысăк пахалăхпа тума обязательство илчĕç. Нефтебаза территорийĕнче çирĕп йĕркелĕх тума, горючине тирпейлĕн тыткаласа 15 процент перекетлесе хăварма тата трактор ĕçĕн хăйне ларакан хакне 10 процента çити йӳнетме сăмах пачĕç.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешни—вăрçăра çĕнтерӳ тăвассишĕн кĕрешни пулать. Ăнăçлă тырпул туса илни—вăрçă фронтĕнче пысăк çĕнтерӳ тунипе пĕрех. Çакна ăнланса илсе, Больше-Раковски МТС коллективĕ чĕнсе каланине сӳтсе-явнă май, иртнĕ çулсенче комбайнерсем пулса ĕçленĕ çынсем халĕ МТС-а пычĕç. Пурĕ 9 комбайнер çĕнĕрен ĕçе килсе комбайнсене юсама тытăнчĕç. Уйрăм трактористсем комбайнсемпе ĕçлеме кăмăл турĕç. Константинов, А. Смолина, П. Сладков, А. Гордеев тата ытти юлташсем комбайнсем çине ĕçлеме куçса тырпул пухса кĕрес плана чыслăн пурнăçлама пулаççĕ.

Çамрăк трактористка Мария Степанова СХТЗ тракторпа ĕçлесе çуракинче 116 гектар ытла сухаланă, плана 186 процент пурнăçланă. Социализмлă ăмăртăва хутшăнса вăл 700 гектар çинчи ĕçсене ăнăçлăн тума обязательство илчĕ. Çавăн пекех Анна Гордеева, Е. Денисова трактористкăсем те тракторпа тумалли ĕçсене 650-шер гектар çинче ăнăçлăн пурнăçлама обязательство илчĕç.

Г. МИХЕЕВ,
МТС директорĕ.

Колхозниксем ăмăртăва хутшăнчĕç

КАЛИНИНО, июнĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Новосибирск крайĕнчи «Путь крестьянина» колхоз членĕсем Совет Союзĕнчи колхозсене пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каланине Чулкаçри «Смычка» колхоз колхозникĕсем пысăк хавхаланупа сӳтсе-яврĕç. Колхоз Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Халĕ колхозниксемпе колхозницăсем ăнăçлăн ӳсе пыракан тырăсене пухса кĕме хĕрӳллĕн хатĕрленме тытăнчĕç.

— Эпĕ социализмлă ăмăртăва хутшăнатăп, кирек мĕнле ĕçре те кулленхи нормăна ирттерсе пурнăçлама сăмах паратăп,—тет колхозăн чи ватă членĕ С. Трофимов юлташ.

Вăл 70 çулта ĕнтĕ. Анчах колхоз производствинче çамрăк çын пек хастарлăн ĕçлет. Çуракинче ĕç нормине 120—150 процент таран тултарса ĕçлерĕ, унăн ĕç кĕнеки çине 50 ĕçкунĕ çырнă ĕнтĕ. Колхозниксен пухăвĕнче вăл пур колхозницăсене те Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнма чĕнчĕ.

Тăватă ача амăшĕ колхозница Ф. Егорова юлташ кулленхи ĕç нормине 130 процент тултарса ĕçлеме пулчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем «Путь крестьянина» колхоз чĕнĕвне хĕрӳллĕн ырлаççĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнаççĕ.

Халĕ колхоз 2 жнейкăна тата урапасене ĕçе тухма хатĕрлесе лартрĕ, çĕнĕ кустăрмасем илчĕ, çурласемпе çавасене шута илнĕ, туптама тытăннă. Колхозра çитес кунсенчех пĕрлешӳллĕ столовăй тата ачасен ясли уçăлмалла. Вĕсем валли 32 центнер çĕрулми, 18 центнер аш-какай, 90 килограмм çу, 9 центнер кĕрпе уйăрса хунă.

Колхоз тырăсене пуçтарса кĕрсе тирпейлес ĕçе 20 ĕçкунĕ хушшинче туса çитерме обязательство илчĕ.

К. МАТВЕЕВ.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн фронтри пек кĕрешме пулатпăр

ÇЕМĔРЛЕ. Пирĕн колхоз çуракине 7 кун хушшинче пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕ. Пур йышши культурăсене те планпа пăхнинчен ирттерсе акса хăвартăмăр.

Колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес хастарлăхĕ кăçал калама çук пысăк. Пур ĕçе те хĕрӳллĕн, çыпăçуллăн тăваççĕ, ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. А. Иванова, М. Хораскин, Г. Федотова колхозниксем суха тунă çĕрте нормăна 200 процент тултарса пычĕç. Е. Андреев колхозник хăй 70 çулта пулсан та тырă акас ĕçре пĕр кун юлмасăр ĕçлерĕ.

Колхозниксен ĕçри пысăк хастарлăхĕ [illegible] çулхинчен 2 хут ытларах лартрăмăр, йĕтĕн акас плана 150 процент пурнăçларăмăр, вир акас плана 5 гектар ытларах тултартăмăр.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕннĕ «Путь крестьянина» тата Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсен пуçарăвне эпир хĕрӳллĕн ырлатпăр. Ăнăçлăн акса хăварнă тырăсене пысăк пахалăхпа ӳстерсе, тирпейлĕн пухса кĕме хамăрăн пĕтĕм вăя мобилизацилетпĕр.

Тырăсене пухса кĕме колхоз хатĕрленсе çитсе пырать. Çак кунсенчех сум сумлас ĕçе вĕçлетпĕр.

С. РОМАНОВ,
«Волна» колхоз председателĕ.

Тырă парас обязательствăна 18 процент ытла пурнăçланă

КАЛИНИНО, июнĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна 1942 çулхи тырă памалли обязательствăна срокчен тултарма тăрăшаççĕ. Паянхи кун Ермошка ялсовечĕ [illegible] Пушкин ячĕпе тăракан колхоз тырă памалли обязательствăна 80 процент тултарнă. План тăрăх вĕсен 1942 çулта 227 центнер памалла пулсан, паянхи кун 200 центнер тĕштырă панă. 1942 çулта тĕштырă парас обязательствăна колхоз [illegible] çак кунсенчех парса татма хатĕрленет.

Çавăн пекех Юманайĕнчи «Коминтерн» колхоз та (председателĕ И. Гаврилов юлташ) государствăна 1942 çулта тĕштырă памалли обязательствăна 55 процент, аш-какай, çăв су памалли обязательствăна 100 процент, çăмарта обязательствине 58 процент пурнăçланă. Юнтапари «Алмаз» колхоз членĕсем те ку тĕлĕшпе тăрăшаççĕ. Колхоз аш-какай парас обязательствăна 190 процент, тĕштырă парас обязательствăна 55 процент пурнăçланă.

Халĕ район колхозсем, кăçалхи тырăсене пуçтарса кĕме тата утă çулма хатĕрленнипе пĕрле, государствăна тырă тасатас тата типĕтес ĕçе хĕрӳллĕн пырать. 4 кун хушшинче районри колхозсем Заготзерно пунктне 1290 центнер ытла тырă леçрĕç, пурĕ 2000 центнер ытла тĕштырă панă, вăл 1942 çулти тĕштырă парас обязательствин 18 процентне танлашать.

И. МУРЗУКОВ,
Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ.

Электроцехри рационализатор сем

КАНАШ. Пĕр чăрмавсăр, пăр [illegible] сехет механизмĕ пек тĕрĕс ĕçлес задача [illegible] электроцехри коллективĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртес тесе, электричество вăйĕпе [illegible] Ку ĕçре тĕп [illegible] ТЭЦ начальникĕ Свешников, инженер Гришин тата кочегар Халиуллин юлташсем [illegible] Халĕ çак сĕнĕве ĕçе кĕртсе ситерчĕ. Завода вăл çулталлăкра 39 пин тенкĕ тупăш парать.

Февраль уйăхĕнче Гришин юлташ шлаксенчен тухакан [illegible]

Электроцехри ытти рабочисем те рационализацие интересленеççĕ. Бригадир Мальнев, мастерсем Панкратов, Данилов, Реньев юлташсем [illegible]

М. АНДРЕЕВ.

Всевобуч боецĕсем самолетсен звенине тума укçа параççĕ

ИШЛЕИ. (Телефонпа). Район центрĕнчи хĕрарăмсен подразделенийĕ [illegible] всевобуч пунктĕнче вĕренекен боецсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума хăйсем хушшинче 1.500 тенкĕ ытла укçа пухса пачĕç.

СЕРГЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн çарри отделĕн заведующийĕ.

Англи бомбардировщикĕсем Дьепп çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 5-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерствин пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: июнĕн 5-мĕш ирхине тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Дьеппри доксем çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбардировщиксемпе истребительсем Голландири аэродромсем çине те бомбăсем пăрахнă. Çак операцисенчен пур самолетсем те чиперех таврăннă.

Англи авиацийĕ вĕçсе пырса тапăннисем мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен Лондонри радио нимĕçсене ăнлантарса парать

ЛОНДОН, июнĕн 5-мĕш. (ТАСС). Лондонри радиостанцисем Германи халăхне тата Германия оккупациленĕ çĕршывсен халăхĕсене Англи авиацийĕ вĕçсе пырса тапăнасси вăйланса пыни çинчен (вĕсене гитлерла хаçатсемпе радио пытараççĕ) тĕплĕн каласа параççĕ. Англи дикторĕсем Германири радио итлекенсем умне чылай ыйтусем лартнă тата вĕсем çине ответсем панă. Çавăн пек вĕçсе пырса тапăннисемшĕн кама айăплă тесе шутламалла?—тенĕ малтанхи ыйту. Нимĕçсене Варшава, Роттердам тата Белград шăпи çинчен астутарса, англичансем Гитлерăн тăратса каланă, граммофон пластинки çине çырнă сăмахĕсене, Англи хулисене çĕр пичĕ çинчен шăлса ывăтмалла тенĕскерсене, радио тăрăх параççĕ. Вĕçсе пырса тапăнасси хăçанччен пырать, текен тепĕр ыйту çине дикторсем: пĕрлешӳллĕ нацисен вăрçă тĕллевĕсем пурнăçа кĕреччен — гитлерла йĕркене тата Германин çар машинине пĕтĕмпех пĕтериччен, тесе ответленĕ. Нимĕçсен мĕнле хăтăлмалли çине ответлесе, диктор: вĕсен Черчилль панă канаш тăрăх каймалла—ĕçлеме пăрахмалла та хуласенчен тухса каймалла, тенĕ. Англи авиацийĕ пырса тапăнассине нимĕçсем чарса лартма пултараççĕ-и?—тенĕ ыйту çине çапла ответленĕ: «Гитлера пĕтернипе чарса лартма пултараççĕ».

Англири радио нимĕçсене норвежецсенчен, чехсенчен, поляксенчен, пусмăрти тата ытти халăхсенчен пример илсе, гестапона хирĕç кĕрешӳ пуçарма чĕннĕ. «Часах нимĕçсемшĕн,—тесе пĕлтернĕ Британири радиовещани компанин дикторĕ,—гестапо террорне хирĕç кĕрешесси каçхине хăйсен çурчĕсенче ларассинчен хăрушсăртарах пулать».

Британири радиовещани компанийĕ Англи авиацийĕ бомбардировка тумалли Франци завочĕсен списокне французсен чĕлхипе пĕлтернĕ. Спископа кăтартнă пур заводсем те гитлеровецсем Франци çыранĕсем тăрăх тăвакан укреплениесем валли цемент туса кăлараççĕ.

Радиостанци, çапла ĕнтĕ, Франци рабочийĕсене çăлăнма тата предприятисенче ĕçлеме пăрахма хушса асăрхаттарать.

Кельн хулинчи халăха урăх çĕре куçарни

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кельн хулинчен 200 пин çынна яхăн васкавлă йĕркепе ытти çĕре куçарнă. Вĕсене Кăнтăр Германири хуласене: Мюнхена, Штутгарта т. ыт. хуласене янă.

Англи войскисем Франци çыранне анни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, июнĕн 5-мĕш. (ТАСС). Англи çарĕсен отрячĕ Францин Булонь районĕнчи çыранне анни çинчен хаçатсем тĕплĕн çырса пĕлтереççĕ. Англичансем ирхине 3 сехетре çырана аннă та нимĕçсене хĕратса пăрахнă. Нимĕçсем, хăраса кайса пăтрашса ӳкнипе, вăхăчĕ-вăхăчĕпе пĕр-пĕрин çине пенĕ. Йĕплĕ пралук тытнă картасенче хушăксем туса, англичансем противникăн оборона зонине пăртак шалалла кĕрсе кайнă. Нимĕçсем пулеметсенчен персе хытă хирĕç тăнă. Анчах Англи салтакĕсем пулеметсенчен тата танка хирĕç кĕрешмелли тупăсенчен пĕр вăхăтрах персе тăшманăн пулемечĕсене путарса лартнă. Икĕ прожектор Англи войскисен карапĕсене тупса палăртсан, нимĕçсем англичансене çав карапсем çине лартма парас мар шутпа пулеметран персе тăма тытăннă. Вара Англи отрячĕн командирĕ хăйĕн салтакĕсене Франци çыранĕнчен каялла чакма хушнă. Тĕтĕм хӳми туса пытанса, Германин оборони тăтăшах персе тăнă вăхăтрах Англи салтакĕсем карапсем çине ларнă та Англи еннелле çул тытнă. Часах Франци çыранĕ çинче авиаци бомбисем çурăлса кайни илтĕннĕ. Çав бомбăсене Англи самолечĕсем нимĕçсен позицийĕсем çине пăрахнă. Хăйсен умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртсен, Англи истребителĕсем Англин салтакĕсене турттарса пыракан карапсене базăна çитиччен ăсатнă.

Америка журналисчĕ Германири политикăллă шалти лару-тăру çинчен

НЬЮ-ИОРК, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). Нумай пулмасть США-на килнĕ Экенер, Юнайтед пресс агентствин Берлинри уйрăмĕн заведующийĕ пулнăскер, çапла каланă: Германире шалти лару-тăру начарланнине тата власть пуçĕнче тăракансем хушшинчи хирĕçӳсем ӳснине кăтартакан паллăсем ытларах палăрма пуçларĕç.

Пĕтĕм çĕршывĕпех тата вăл оккупациленĕ территорисенче те саботаж сарăлса пырать. Германире куллехех «тăшманла ĕçсемшĕн» айăпласа асаплантарса вĕлереççĕ.

Берлинăн сывлăшран тапăнассинчен сыхлакан системин тулашри унки чылай вăйсăрланнă, мĕншĕн тесессĕн нумай орудисене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта илсе кайнă.

Германире хĕл каçах вĕçĕ-хĕррисĕр мобилизаци пулса пычĕ, вăл шутра 17 çулти çамрăксене те илнĕ. Нимĕçсем, уйрăмăнах аслăрах çултисем, ывăнса çитни палăрать.

Гитлерла штурмовой отрядсемпе яланхи çар хушшинчи отношенисем çивĕчленсе пыраççĕ. Çавăн пекех тата гестапопа авиаци министерствин шухăшĕсем тĕрлĕрен пулни те пĕрмаях ӳссе пырать.

Пур çĕрте те паллă летчика генерал Удета гестапо вĕлернĕ текен шухăшсем сарăлнă. Чи çывăх юлташĕсене те унăн ӳчĕ патне пыма ирĕк паман. Удет вилнĕ вăхăтрах сывлăшри çар вăйĕсен темиçе çĕр офицерне арестленĕ. Гитлерпа килĕшмен паллă мар организацие тупса палăртнă пулас. Çапла кăтартаççĕ: ку организацире Удетсăр пуçне авиацин ытти генералĕсем те, çавăн пекех тата темиçе министерствăпа çыхăнса ĕçленĕ çынсем те пулнă.

Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Болгарие, Венгрие тата Румыние хирĕç вăрçа хутшăнаççĕ

ВАШИНГТОН, июнĕн 5-мĕш. (ТАСС). Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи представительсен палатипе сенат США Болгарипе, Венгрипе тата Румынипе вăрçăллă пулни çинчен келакан деклараци ырланă.

Деклараци çапла калать:

«Конгресс Болгари, Венгри тата Румыни правительствисем США правительствипе тата халăхĕпе вăрçăллă тăраççĕ тесе пĕлтерет тата çак вăрçа ирттермелли мероприятисене пурнăçлама ирĕк парать. Болгари, Венгри тата Румыни правительствисем США правительствипе халăхне хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтерчĕç пулсан, США сеначĕпе представительсен палати США-па Болгари, Венгри тата Румыни правительствисем хушшинче вăрçăллă лару-тăру пулни çинчен официально пĕлтереççĕ, ку вăрçа Пĕрлешӳллĕ Штатсене ирĕксĕр йышăнтарчĕç. Çавна май палатăпа сенат США президентне Болгари, Венгри тата Румыни правительствисене хирĕç вăрçă туса пымашкăн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен мĕнпур тивĕç тата çар вăйĕсемпе, правительствăн ресурсĕсемпе усă курма ирĕк параççĕ. Вăрçа ăнăçлăн пĕтиччен туса пымашкăн США Конгресĕ çĕршывăн пур ресурсĕсемпе те усă курма гаранти парать.

Анкарари судра

АНКАРА, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Анкарари судăн икĕ заседанийĕ пулса иртнĕ. Çак икĕ заседанире Абдурахманăн защитникĕ сăмах каланă. Суд пыракан залра пулнă çынсен чылай пысăк пайĕ защитник сăмахне тăрăхласа кулса кĕтсе илнĕ, мĕншĕн тесен, хăй защитник пулса тăнине манса, адвокат хăйĕн вăрăм сăмахĕнче Абдурахман пирки пачах нимĕн те каламан. Ун вырăнне Павловпа Корнилов пирки кăшкăрашма тытăнса, адвокат хăйĕн сăмахне «коммунизм хăрушлăхĕ» çинчен тĕлли-паллисĕр тата кулăшла сӳпĕлтетнипе тултарса лартнă. Турци адвокачĕ Совет Союзĕ тĕлĕшпе тăшманла сăмахсем чылай каланă, çав сăмахсене фашистсен геббельсла кухньинчен илни уççăнах курăнса тăнă.

Çак «хӳтĕлекен» сăмахăн тăмсайлăхне кăтартса пама çакă та çителĕклĕ: «пĕтĕм тĕнчере коммунизм хăрушлăхĕ ӳссе пынине» кăтартса пама кăтланса, çак адвокат текенскер малтан алеклĕ, пуçран шухăшласа кăларнă тĕрлĕ çырусене, «Коминтернăн ĕçĕсем» çинчен калакан гитлерла листоксем пек çырусене вуласа панă, унтан трукахĕ.. потребкооперацине Центросоюз çине ывтăнса ӳкнĕ. Адвокат Центросоюз мĕн иккенне пачах та ăнланман, çав ята вăл суд умĕнче хăй нумай пĕлнине кăтартас тесе, ССР Союзĕнче Центросоюз пек обществăллă «хăрушă» организацисем пуррине хăй пĕлнĕ пек кăтартас тесе тата Павловпа Корнилов çав организацисемпе çыхăнса тăракан «конспираторсем» пулса тăнине кăтартас тесе асăннă. Совет Союзĕ çинчен кăшт та пулин пĕлсе тăракан çынсем судра кулса ярасран аран-аран тытăнса тăнă.

Сӳпĕлти адвокатăн çак сăмахĕсем Папен çине «тапăннă» пирки пуçланă ĕçпе нимĕнле те çыхăнса тăмаççĕ. Хăй хӳтĕлекен Абдурахмана илес пулсан, адвокат ăна тӳрре кăларма кирли çинчен, вăл «опытлă марри» çинчен тата «тапăннă çĕрте вăл пулманни» çинчен каланипех ирттерсе янă.

Адвокат сăмахĕ пыççăн хăйне хӳтĕлеме Сулеймана сăмах панă. Вăл, процесра ялан хăвланнă певех, сăмах калама килĕшмен, таçам çырса хатĕрленĕ сăмаха вуласа пама ыйтнă. Судья çавăнтах палăртнă тăрăх, васкавнă пирки çав сăмах çине Сулейман алă та пусма ĕлкĕреймен. Тăмсай парикмахерăн Сулейманăн çав «сăмахĕнчен» çакна вуласа панă: «Мана кунта коммунизмшăн айăплаççĕ, анчах манăн нимĕнле идеал та çук. Манăн идеал—бритвăпа хачă». Судра пулнисем çакна илтсен кулса янă.

Суд председателĕ Павловпа Корниловран вĕсем хăйсене хӳтĕлеме хатĕр-и, тесе ыйтни çине Павловпа Корнилов хатĕр тесе ответленĕ; вĕсем: эпир хамăр сăмахсене вырăсла калатпăр, сăмахсен текстĕсене судăн переводчикĕсене Турци чĕлхи çине куçарма паратпăр, тенĕ. Кĕтмен çĕртен прокурор сăмах илнĕ те: Павловпа Корнилов хӳтĕленсе каланă сăмахсене итлеме «кирлех мар», вĕсен сăмахĕсене Турци чĕлхи çине куçармалла та вуласа памалла, тесе каланă. Хăйĕн сăмахне тăван чĕлхепе калама ăна никам та чарма пултараймасть, тесе Павлов хирĕç тăнă пулин те, суд çакăн пек тĕлĕнмелле решени йышăннă: Павловпа Корнилова хăйсен сăмахне тăван чĕлхепе калама чарас, вĕсене хăйсен сăмахĕсене ултă кун хушшинче Турци чĕлхи çине куçарттарса пама хушас, тесе йышăннă.

Судăн килес заседанине июнĕн 10-мĕшĕнче тума палăртнă.

Англия Китая пулăшу пани çинчен Иден тухса калани

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕнчен Иденран Англия Китая пулăшни çинчен каласа пама ыйтнă пулнă. Çав ыйтусем çине ответлесе, ĕнер Иден общинăсен палатинче сăмах тухса каланă. Англипе США хĕçпăшалсем кивçен тата арендăна парасси çинчен йышăннă вакона пула, — тесе кăтартса панă Иден, — Китай тĕрлĕрен боеприпассемпе çар хатĕрĕсем илсе тăрать. Вĕсен укçине Вашингтонпа Лондон тунă пĕрлешӳллĕ фондран тӳлеççĕ.

Тепĕр ыйту çине ответлесе, Иден Китай войскисем Бирмăра питех те пысăк пулăшу панине палăртнă. «Эпĕ çапла калама пултаратăп,—тенĕ Иден,—икĕ çар çума-çумăн çапăçнă чух пур çĕрте те туслă çыхăнусемпе юлташла шухăш кăмăлсем палăрчĕç».

Каунасра восстани пулнă

«Ньюс Уик» журнал çапла пĕлтерет: илнĕ сведенисем тăрăх, нумаях пулмасть Каунасра пысăк восстани пулса иртнĕ, ăна гитлеровецсем пусарса лартнă. Хулари халăха вара питĕ тискеррĕн тыткаланă. (ТАСС).

—⊙—

ПĔЛТЕРНИ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпунктĕнче (Чувашская урам, 6) июнĕн 8-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре çак темăпа лекци пулать:

«Чăваш хресченĕсен 1842 çулти восстанийĕ 100 çул тултарни».

Лектор—**П. Г. Григорьев.**

Лекцие пурте кĕрсе итлеме пултараççĕ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпункчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ
для работы в отъезд:
1. Главный бухгалтер.
2. Старший бухгалтер.

Для работы в Чебоксарах:
1. Зам. главного бухгалтера, знакомый с произв. учетом.
2. Бухгалтер-ревизор.

Обращаться: г. Чебоксары, ул. Ленина, № 64, к главному бухгалтеру.

Управлению Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР
ТРЕБУЮТСЯ на постоянную работу контролеры-ревизоры, инспектор-бухгалтер и секретарь-машинистка.
С предложением обращаться по адресу: Красная площадь, 4, здание Наркомфина, 3-й этаж. Тел. № 4-00.
Управление Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР.

Чувашскому тресту «Росглавхлеб»
требуются: главный бухгалтер, нормировщик, товаровед и зав. складом.
Обращаться: Чебоксары, Калинина, 6. Тел. № 7-93. 5—3.

ТРЕБУЕТСЯ КЛАДОВЩИК.
Обращаться: Чувашская, 66.
Центроэлектромонтаж. 3—2.

НАРКОМПРОС ЧУВАШСКОЙ АССР
об'являет прием в I, II и III классы Батыревского, Калининского, Цивильского, Ядринского, Порецкого школьных педучилищ, Канашского школьного и дошкольного педучилища.
В педагогические училища принимаются лица обоего пола в возрасте от 15 до 30 лет, имеющие образование в об'еме неполной средней школы или семи классов средней школы.
Поступающие в первый класс подвергаются вступительным испытаниям по русскому языку (устно и письменно диктант), арифметике (устно и письменно), по родному языку (устно и письменно).
Окончившие в 1940-42 г.г. неполную среднюю школу или семь классов средней школы с отличными оценками по основным предметам принимаются в педагогические училища без вступительных испытаний.
Лица, окончившие VIII и IX классы средней школы, в I класс принимаются с испытаниями по русскому языку (письменно).
Окончившие IX—X классы средней школы, рабфак, среднюю школу взрослых, техникум принимаются во II и III классы с испытаниями по русскому языку (письменно), а также по тем предметам учебного плана педучилища, которые не были пройдены в своих учебных заведениях.
Заявления подаются на имя директоров педагогических училищ с приложением: свидетельства об образовании, свидетельства о рождении, двух фотографических карточек, справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных) и справки о состоянии здоровья.
Прием заявлений о зачислении в педагогические училища производится с 1-го июня по 30 августа. К заявлению следует приложить почтовые марки для ответа на 60 коп.
Прием заявлений в педагогические училища производится с 20 по 30 августа.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ
техник строитель-сметчик, коменданты общежитий;
КВАЛИФИЦИРОВАННЫЕ РАБОЧИЕ:
токари, строгальщики, термисты, слесаря-водопроводчики, жестянники, слесаря по сварным и железным конструкциям, инструментальщики, формовщики, обрубщики, лакоеры, прессовщики, кузнец-молотобоец, шорник-смазчик, печник, штамповщицы, установщики штампов и пресформ, машинисты (компрессоров, литья под давлением насосов), маляры, каменщики, штукатуры, стекольщик, ящечники, упаковщики, плотники, подсобные рабочие, грузчики, уборщицы-курьеры.
Требуются пожарные работники (мужчины и женщины), которые обеспечиваются общежитием.
Принимаются переквалификанты от 16 лет.
Обращаться: Ленинградская ул., № 38, бюро пропусков.

АЛАТЫРСКИЙ ЛЕСОТЕХНИЧЕСКИЙ ТЕХНИКУМ НАРКОМЛЕСА СССР
об'являет прием студентов на 1942-43 учебный год на отделения:
а) Лесохозяйственное и
б) По строительству, ремонту и эксплоатации лесовозных дорог.
К вступительным испытаниям допускаются граждане обоего пола в возрасте от 14 до 35 лет, имеющие свидетельство об окончании не ниже 7 классов НСШ.
Срок обучения 3 года.
Подробные справки о приеме можно получить по адресу: гор. Алатырь, ЧАССР, улица Ленина, 15, Лесотехникум.
Срок подачи заявлений до 15 августа 1942 г. Прием испытаний с 20 по 25 августа 1942 г. Начало занятий 1-го сентября 1942 г.
ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. 6. 53 [illegible]